26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944
ЯНВАРЬ
26
ЮНКУН
18(6513) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнине çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илер

Çак историллĕ кунсенче пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хăватлăн çĕмĕрсе пырать. Пирĕн паттăр çарсем куллен-кун çĕнĕ хуласене, халăх пурăнакан вунншар ялсемпе район центрĕсене тăшмантан ирĕке кăлараççĕ, нимĕç вăрă-хурахĕсене хĕвеланăç чиккисем патнелле хăвалаçа пыраççĕ.

Çĕнтерӳ çывăх,—çакна пирĕн халăх çирĕппĕн шанса тăрать. Çавăнпа, тунă çитĕнӳсемпе lăпланса лармасăр, вăл хăйĕн_мĕнпур вăйне фронта ытларах пулăшнă çĕре, тăшмана çĕнтерес сехете хăвăртрах çывхартнă çĕре парать.

Хамăрăн Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те йĕркеллĕн парса тăрассишĕн совет çыннисем вăй хурса, хастарлăн ĕçленине Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ пысăка хурса хаклать. Юратнă çулпуçăмăр совет тылĕн ĕçне çавăн пек хаклани çине ответлесе, пирĕн çĕршыври малта пыракан предприятисен коллективĕсем малашне татах та тăрăшарах ĕçлеме пулса Тăван çĕршывпа Сталин юлташ умĕнче тупа турĕç.

Çавăн пек тупа тунине вĕсем Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас умĕнхи социализмлă ăмăртура чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Орденлă Чăваш республикинчи нумай предприятисемпе колхозсенче, учрежденисемпе шкулсенче Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас уяв умĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлса кайрĕ.

Пирĕн республикăри малта пыракан пысăк заводсем фронт заказĕсене йĕркеллĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Унти рабочисемпе инженерла-техникла работниксем фронт ыйтнă пек ĕçлеççĕ, чылай заводсем вăрçă Пĕтĕм Союзри заводсен ретĕнче уйăхран уйăхах хисеплĕ вырăн йышăнса тăраççĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод (главнăй инженер пулса Якунин юлташ ĕçлет) саккăрмĕш уйăх ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче çирĕппĕн тытса тăрать. Çак завод коллективĕ, Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, фронт валли татах ытларах продукци туса кăларма пулчĕ. Вуншар стахановецсем ĕç нормине 300—400-шер процент тултарса пыма, темиçе çĕр рабочи куллен икĕ çыншăн ĕçлеме сăмах пачĕç.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ хăйĕн сăмахне ялан чыслăн пурнăçа кĕртсе пырать. Федченко юлташăн цехĕ, Дмитренко, Данилова тата ытти чылай стахановецсем халĕ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа стахановла вахтăна тăнă, вĕсем куллен хи задание 200 процентран ирттерсе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Республика промышленноçĕ, иртнĕ çулхи производство программине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе, Верховный Главнокомандованин фондне темиçе миллион тенкĕлĕх продукци пачĕ. Тăшмана çĕнтермелли çак фонд валли продукци туса кăларассишĕн халь республикăри кашни предприяти, кашни артель çине тăрса кĕрешет.

Республикăри колхозсем çитес çулхи вăйлă тыр-пулăн никĕсне вăхăтра та тĕплĕн хывса хăварма тăрăшаççĕ. Малта пыракан колхозсем вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттармалли уйăхлăх пуçланнăранпа хире тислĕк кăлармалли тата кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли плансене ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç. Колхозлă ял мĕнпур вăйсемпе майсене вăрçă вăхăтĕнчи виçсĕмĕш çуракине кăтартуллăн ирттерме хатĕрленнĕ çĕре мобилизацилет.

Вăрман хатĕрлесе турттаракансем те мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн 26 çулхи уявне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Республикăра малта пыракан Йĕпреç вăрманпромхозĕн коллективĕ (директорĕ П. Федоров юлташ) 1944 çулти пĕрремĕш çурçулта чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă тĕле пурнăçа кĕртме обязательство илнĕ. Вăрнар лесхозĕнче ĕçлекен Шăхасан районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Чăваш республикинчи вăрман касакансене, турттаракансене, вăрман хатĕрлекен предприятисен инженерла-техникла работникĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене 1944 çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă кун тĕлне, вутă турттармалли плана—мартăн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама чĕнсе каларĕç. Вĕсен чĕнĕвĕ «Чăваш Коммуни» хаçатăн ĕнерхи номерĕнче пичетленсе тухрĕ.

Вăрнар лесхозĕнче ĕçлекен рабочисемпе инженерла-техникла работниксем çĕршывпа фронта оборона завочĕсем валли, фабрикăсемпе заводсем тума, çавăн пекех тата нимĕç оккупанчĕсем ишнĕ хуласемпе ялсене юсаса йĕркелеме вăрман материалĕсем вăхăтра та çителĕклĕ парса тăрассишĕн кĕрешеççĕ, чугун çул транспортне пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерсе тăмашкăн топливо парса тăма тăрăшаççĕ. Çак шутпа вĕсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçлассишĕн кĕрешĕве тухрĕç.

Вырăнти партипе совет тата хуçалăх организацийĕсен руководителĕсем Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе организацилеме тивĕçлĕ. Социализмлă ăмăртăва хутшăнмасăр пĕр рабочи те, колхозникпе колхозница та, МТС работникĕ те, учрежденире е артельте ĕçлекен те ан юлтăр.

«Нимĕç çарĕ катастрофа умĕнче тăрать,—терĕ Щербаков юлташ 1944 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче пухăннă траурлă чаплă ларура.—Анчах вăл хăй тĕллĕнех арканса каяс çук... Çĕнтерес тесен, пирĕн халăхăн, пирĕн партин татах та нумай вăй хурса ĕçлемелле пулать-ха».

Фашистла захватчиксене тĕппипех пĕтерсе тăкмашкăн кашни совет çыннин мĕнпур вăя мобилизацилемелле. Кĕрешмесĕр, вăй хумасăр çĕнтерме çук. Тăшмана татăклăн çĕнтермелли куна çывхартмашкăн Хĕрлĕ Çар, совет тылĕ, пирĕн пĕтĕм халăх мĕнпур вăйпа тăрăшни кирлĕ.

Промышленноçра ĕçлекенсен фронтпа çĕршыв валли пур йышши продукцисене те кирлĕ таран, пирĕн паттăр фронтовиксем ыйтнă пахалăхпа парса тăмалла. Чугун çул работникĕсен фронта кирлĕ продукцисене тивĕçлĕ вырăна хăй вăхăтĕнче çитерме тăрăшмалла, чугун çул транспортне тип-тикĕс, пĕр чăрмавсăр ĕçлеттермелле. Колхоз хресченĕсем çитес çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитессишĕн çине тăрса кĕрешмелле т. ыт. те.

Кашни совет çыннин, фронтра çапăçать-и вăл е тылра хĕрсе ĕçлет-и,—айăпсăр совет çыннисене асаплантарнăшăн нимĕç тискер-кайăкĕсене тавăрмалла, нимĕç-чунилисене хăвăртрах тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкмалла, тăван Совет çĕрне ирĕке кăлармалла.

Çак лозунгпа ĕçлесе, Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас уяв умĕнхи социализмлă ăмăртура фронта пулăшас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ЛЕНИНГРАД фронтĕнчи çарсем, ăнăçлă наступлени туса пырса, январĕн 24-мĕшĕнче ПУШКИН хулине (ЦАРСКОЕ СЕЛО), ПАВЛОВСК хулине (СЛУЦК) тытса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăнса илнĕ, вăл шутра СОНАКОВО, КОЛОДЕЗИ, ХЮЛЬГЮЗИ, НОВОЕ ЕРМОЛИНО, СТАРОЕ ЕРМОЛИНО, СМОЛЬКОВО, ВОХОНОВО, ПЕДЛИНО, САЛЕЗИ, БОЛЬШОЕ РЕЗИНО, СОККОЛОВО, РОМАНОВКА, ГОРКИ, ПОКРОВСКАЯ, ГУКАЛОВО, ПОПОВА ятлă ялсене. Пирĕн çарсем ГАТЧИНАПА НАРВА хушшинчи чугун çула татнă.

Январĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем ТОСНОРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, вăл шутра нимĕçсем хăйсен оборонин вăйлă узелĕ туса хунă УЛЬЯНОВКА ятлă пысăк яла тата ЛЕНИНГРАДПА МУСКАВ хушшинчи чугун çул çинчи САБЛИНО ятлă чугун çул узелне.

НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, ЗАПОЛЬЕ, СТЕГАЧЕВО, ИЗОРИ, КШЕНТИЦЫ, БОГДАНОВО, БОЛЬШАЯ ВИДОГОЩЬ, СТЕХОВО, СУТОКИ, ЛАРЕШНИКОВО, ОРЛОВО, СИДОРКОВО, БОЛЬШОЕ ПОДСОНЬЕ, МАЛОЕ ПОДСОНЬЕ, СЕЛЦО, ВЕРХОВЬЕ, СПАСПИСКОПЕЦ, ГОРОШКОВО, ЗАБОЛОТЬЕ, КУРИЦКО, СЕРГОВО ятлă ялсене тата СТРЯСОВО, БОРОК ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ВИННИЦА хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, нимĕçсене çынсемпе техника енчен пысăк çухату сем кӳнĕ.

Ытти участоксенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 46 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 45 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Ленинград фронтĕнчи çарсем ăнăçлă наступлени туса пынă. Пирĕн пехотинецсем, танкистсем тата артиллеристсем, тăшманăн вăйлă вут-çулăмне çĕнтерсе, Пушкин хулине (Царское Село) тата Павловск хулине (Слуцк) кăнтăр-хĕвеланăç енчен иртсе кайса çавăрса илнĕ. Совестсен ытти чăсĕсем тăшмана фронт енчен çав тери хăвăртлăн атакăланă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Нумай вăхăтлăха тунă укрепленисене кĕрсе вырнаçнă гитлеровецсем пирĕн çарсем пыра-пыра çапнине чăтма пултарайман, вĕсем нимĕн йĕрки-пахлисĕр каялла чакма тытăннă. Пушкинпа Павловск хулисене йышăннă хыççăн пирĕн чăсем тупăсем нумай (вăл шутра инçене перекеннисене те) тата боеприпассемпе çар пурлăхĕн пысăк склачĕсене тытса илнĕ. Тăшмана çынсем тĕлĕшпе пысăк çухатусем кӳнĕ.

Тепĕр участокра пĕр соединени чăсĕсем, ăнăçлăн малалла куçса пырса, Гатчинăпа Нарва хушшинчи чугун çула татнă. Çав çул патне пымалли вырăнсене вăйлăн хӳтĕлесе тăнă тăшманăн чăсĕсене аркатса тăкнă. Нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе тăкнă. 10 танк, 27 тупă, 50 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Тосноран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çăмаллăн куçса çӳрекен чăсĕсем, тăшманăн хирĕç тăмалли узелĕсенчен ирте-ирте кайса, унăн тылне кĕре-кĕре каяççĕ, çулйĕрсене пыра-пыра çапаççĕ. Нимĕçсем, çавăрса илессинчен хăраса, васкаса каялла чакаççĕ, вĕсене çавăн чухне çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем кӳреççĕ. Саблино ятлă чугун çул узелĕшĕн пынă çапăçура пирĕн боецсем нимĕç пехотине пĕр батальон ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр районра каялла чакакан нимĕçсем пĕтĕмĕшпех юсавлă 13 тупă, 17 миномет, çар хатĕрĕсем тиесе лартнă платформăсемпе вагонсем нумай, артиллери склачĕ тата хăватлă радиостанци пăрахса хăварнă. Чылай нимĕçсене тыткăна илнĕ.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем тăшманăн Веронда шывĕ çинчи оборонине татнă та, çитĕнĕве вăйлатса пырса, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет çарĕсем, çапăçса малалла куçса пырса, Ильмень кӳллипе Веряжа шывĕ хушшинчи çурутрава нимĕçсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Кун каçа нимĕçсен пехотине пĕр полка çити вĕлерсе пĕтернĕ, 7 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 3 тупă, артиллерипе минометсен 11 батарейине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Винница хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă, халăх пурăнакан пĕр пункт темиçе хутчен те алăран аллă куçнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 500 вилли не çити выртса юлнă. Пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 30 танкне ытла, хăй тĕллĕн çӳрекен 6 туппине, 2 бронемашинине тата 9 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Барановичи облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен 12 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 10 паровоз, салтаксем ларса пынă 9 вагон, танксем турттарса пынă 4 платформа, боеприпассем илсе пынă 7 вагон тата çар хатĕрĕсем тиенĕ темиçе вунă вагон çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ е сиенленнĕ. Çав отрядри партизансемех, минăсем лартса, нимĕçсен 37 грузовой автомашинине сирпĕнтерсе янă тата çар пурлăхĕн 2 складне çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 87-мĕш противотанковăй дивизионĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Петр Ераб çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн дивизиона 213-мĕш пехотнăй дивизие панăччĕ. Ку дивизи 2-мĕш эшелонра тăратчĕ. Ирхине артиллери питĕ хăватлăн пеме пуçларĕ. Малтан эпир нимĕçсен артиллерийĕ перет пуль тесе шутларăмăр. Анчах та пĕр сехет иртсенех пур енчен те нимĕн йĕрки-пахлисĕр таракан нимĕç салтакĕсем курăнма пуçларĕç, вĕсене вырăс танкĕсем хыçăнах хăваласа пыраççĕ. 213-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ оборонăна йĕркелеме хăтланчĕ, анчах та ку ĕçре нимĕн те тухмарĕ. Пирĕн салтаксем ăçта куç курнă çавăнта тарма пуçларĕç. Пирĕн дивизиона та çавăн пекех паника ярса илчĕ. Хирĕç тăни ним усăсăр пулнине кура, эпĕ ытти салтаксен ушкăнĕпе пĕрле тыткăна парăнтăм». Çав дивизирех пулнă 318-мĕш полкри штаб ротинчен тыткăна лекнĕ телефонист обер-ефрейтор Вальтер Браташ çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн полк вырăссем хĕссе пынине тӳссе тăма пултараймарĕ, ним йĕрки-пахлисĕр каялла чакма пуçларĕ. Темиçе сехет иртсен, командовани пире пулăшма 25 танк пачĕ, анчах та вĕсенчен вуниккĕшне вырăссем çавăнтах персе çĕмĕрчĕç. Пирĕн полк, каялла чакса пырса, икĕ кун хушшинче хăйĕн личнăй составне çуррине ытла çухатрĕ».

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

НКВД-н Дальстрой работникĕсене Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне парасси çинчен

Инçетри Çурçĕрте промышленноçть тăвас ĕçре уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн тата сайра тĕл пулакан металсемпе тĕслĕ металсем кăларас плана вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн çаксене, Ленин орденĕпе «Çурлапа мăлатук» ылттăн медаль парса, Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне парас:

Государство хăрушсăрлăхĕн III-мĕш рангри комиссарне Иван Федорович Никишова,

Инженер-полковника Валентин Александрович Цареградские.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи январĕн 20-мĕшĕ.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Улатăр районĕнчи хатĕрлев конторине (управляющийĕ Назаров юлташ) иккĕмĕш премипе пама йышăннă.

В.И. Ленин ячĕпе тăракан государство библиотекинче

В. И. Ленин ячĕпе тăракан государство библиотеки—тĕнчери чи пысăк библиотекăсенчен пĕри пулса тăрать. Унăн фондĕнче 9 миллион кĕнекепе журнал тата 2 миллион лист алçырăвĕсем пур. Вăрçă пуçланнăранпа библиотекăра çĕнĕрен вичĕ зал уçнă, çамрăксен отделне организациленĕ. Библиотекăна куллен 2.000 çын çӳрет.

Библиотека ют çĕршывсенчи учрежденисемпе пысăк çыхăну тытать. Вăл 16 çĕршыври культура учрежденийĕсемпе кĕнекесем улăштарса тăрать.

Çĕнĕрен 100 пин вкладчик

Государствăн перекет кассисемпе госкредитăн Главнăй Управленийĕ панă сведенисем тăрăх, 1943 çулхи 4-мĕш кварталта СССР-ти перекет кассисенчи вкладчиксен ретне çĕнĕрен татах 100 пин вкладчик кĕнĕ. Пуринчен те ытларах вкладчиксен йышĕ Мускаври, Ленинградри, Алтай тата Хабаровск крайĕсенчи перекет кассисенче ӳснĕ. (ТАСС).

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ заводра

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă. Правительствăн çак пысăк наградине илнĕ ятпа заводра митинг пулса иртрĕ.

Нихăçанхинчен савăнăçлă кун. Кашни рабочипе работница пĕр-пĕрин çине савăнса пăхса илеççĕ.

Ку завод коллективĕ 20 уйăх ĕнтĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малта пырать. Саккăр уйăх хушши Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать. Çакă вăл—завод коллективĕ вăрçă тивĕçлĕ ĕçленин чаплă результачĕ.

Митингра Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи парти контроль комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Серов юлташ, ВКП(б) Обком секретарĕн оборона промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ Крылов юлташ пулчĕç.

Завод директорĕ фронт çывăхĕнчен куçса килнĕ çак завод, пысăк йывăрлăхсене пăхмасăр, ăнăçлăн ĕçлесе пыни çинчен каласа пачĕ тата лайăхрах ĕçлесе, фронта татах та ытларах пулăшма сăмах пачĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ паллă стахановец Димитренко юлташ хытă савăнса çапла каларĕ: «Партипе правительствăна çак пысăкран та пысăк наградăшăн тав тума нимĕнле сăмах та тупса кăлаймастăп. Эпĕ хам ĕçре тата пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн ниме шеллемесĕр ĕçлĕп. Ман пĕр шухăш кăна—пĕтĕм вăй-хала çĕнтерӳ тума парасси,—терĕ вăл.

Çавăн пекех митингра Федченко, Данилова стахановецсем те тухса каларĕç. Вĕсем малашне татах та тухăçлăрах ĕçлеме пулса, аслă çулпуçа Сталин юлташа тупа турĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ ячĕпе митингра Совнарком Председателĕ Матвеев юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Партипе правительство сирĕн пархатарлă ĕçĕрсене кура пысăк награда пачĕç,—тет Матвеев юлташ, — анчах çак награда вăл тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаллине пĕлтермест. Халĕ сирĕн, нихăçанхинчен те паттăртарах ĕçлесе, ĕçре татах та пысăк çитĕнӳсем тумалла. Сире хăвăр производствăра чаплă çитĕнӳсем тума сунатăп.

Юлашкинчен митинг пысăк савăнăçпа Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ патне çырнă çырăва йышăнчĕ.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, МТС-сем, МТМ-сем тата машинăсене юсакан заводсем 1943 çулăн IV-мĕш кварталĕнче тата декабрь уйăхĕнче тракторсене юсамалли плана мĕнле пурнăçа кĕртнин итогĕсене пăхса тухса, ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 20.000 тенкĕ укçалă премие тракторсене юсамалли плана пурнăçланă е ытлашшипех пурнăçланă нумай МТС-сене, МТМ-сене тата машинăсене юсакан заводсене памалла тунă. Вĕсен шутĕнче Йĕпреç МТС-ĕ (МТС директорĕ Иванов юлташ, старши механикĕ Михайлов юлташ) пур.

ЙĔПРЕÇ МТС ДИРЕКТОРНЕ ИВАНОВ ЮЛТАША, СТАРШИ МЕХАНИКЕ МИХАЙЛОВ ЮЛТАША

1943 çулăн IV-мĕш кварталĕнче тата декабрь уйăхĕнче тракторсене юсамалли плана ăнăçлăн пурнăçланăшăн ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Сирĕн МТС-а памалла тунă май, МТС-ри трактористсемпе пур работниксене те сывлăх сунса саламлатăп.

Сирĕн МТС-ра ĕçлекенсем тракторсене тата вĕсен çумне кăкарса ĕçлемелли инвентарьне юсамалли çулталăкри плана та ăнăçлăн пурнăçлассине шанатăп.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Н. МАЛОВ.

1944 çулхи январĕн 24-мĕшĕ.

Хĕрлĕ Ялавлă МТС-ра

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Йĕпреç МТС-не памалла туни çинчен илтсенех, МТС-ри трактористсен, инженерла-техникла работниксен тата служащисен савăнăçлă митингĕ пулса иртнĕ.

Митингра МТС-ри паллă стахановец-слесарь Кондоркин юлташ кашни кунах икĕ нормăран кая мар тултарса пыма сăмах панă.

— Куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава пирĕн МТС-а памалла туни,—тенĕ трактористсен 1-мĕш бригадине ертсе пыракан Яковлев юлташ,—пире татах та пикенерех ĕçлеме хушать. Хĕрлĕ Ялава илни пысăк чыс та хисеп, çав вăхăтрах вăл пирĕн çине пысăк ответлăх хурать. Эпир çак ответлăха туйса ĕçлĕпĕр. Хĕрлĕ Ялава хамăр алăран ямăпăр. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне бригада çумне çирĕплетсе панă пур тракторсене те юсаса пĕтерме сăмах паратăп,—тенĕ Яковлев юлташ.

Митингра пулнисем, пĕр кăмăллă пулса, февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне мĕнпур тракторсене тата вĕсен çумне кăкарса ĕçлемелли пур инвентарьсене те юсаса пĕтерме йышăннă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтупа пулнă канашлу

Январĕн 24-мĕшĕнче Шупашкарта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес пирки канашлу пулса иртрĕ. Канашлура Шупашкар, Ишлей, Красноармейски, Çĕрпӳ, Октябрьски тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи ВКП(б) райкомĕсен иккĕмĕш секретарĕсем, райсовет исполкомĕсен председателĕсем, çĕрĕç пайĕсен заведующийĕсем тата старши зоотехниксем пулчĕç.

1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлесе пыни çинчен Красноармейски, Шупашкар, Ишлей, Çĕрпӳ райсовет исполкомĕсен председателĕсем тата Сĕнтĕрвăрри райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ доклад туса пачĕç.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Троицкий юлташ хăйĕн сăмахĕнче лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçе мĕнле йĕркелемелли çинчен каларĕ.

Юлашкинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Белков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес пирки иртнĕ 1943 çулта мĕнле ĕçленине палăртрĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана иртнĕ çул мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 114 процент, сыснасем енĕпе 108,7 процент, сурăхсем енĕпе 112,2 процент пурнăçланине палăртрĕ.

Çав вăхăтрах,—терĕ Белков юлташ,—лашасем ĕрчетес плана пурнăçлаймарăмăр, тихасене пăхса çитĕнтерес тата лашасемпе усă курас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Уйрăм районсенче пĕтĕ кĕсресемпе кирлĕ пек тĕрĕс усă курмаççĕ.

Белков юлташ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес пирки малалла мĕн тумалли çинчен, районсене ортсе пыракансен умĕнче ку тĕлĕшпе мĕнле задачăсем тăни çинчен, вĕсене пурнăçламашкăн мĕнле ĕçлемелли çинчен каласа пачĕ.

Çакăн пек канашлусем республикăра тăватă вырăнта—Канашра, Чкаловскинче, Улатăрта тата Советскинче пулса иртеççĕ.

Т. КАРАСЕВА.

Совет Союзĕн Геройĕ гварди майорĕ М. Е. Ефимов тăван ялĕнче пулни

Совет Союзĕн Геройĕ гварди майорĕ М. Е. Ефимов юлташа Элĕк районĕнчи ĕççыннисем ăшшăн кĕтсе илчĕç. Икĕ кун хушшинче районри колхозсенче пулса, вăл колхозниксене тăван Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем çинчен, тăшмана çирĕппĕн хăваласа пыни тата хăйĕн геройла ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Колхозниксем Хĕрлĕ Çарăн паттăр ĕçĕсемпе хавасланса малалла тата тăрăшарах ĕçлеме, çитес çуракине большевикла хатĕрленме пулчĕç.

Совет Союзĕн Геройĕ Ефимов юлташ хăй çуралса ӳснĕ Сануşкари колхозниксемпе, районри партипе совет активĕпе тĕл пулса каларĕ, тата хăй вĕреннĕ Элĕкри вăтам шкулта пулчĕ.

Январĕн 23-мĕшĕнче Совет Союзĕн Геройĕ — гварди майорĕ М. Е. Ефимов юлташ Мускава тухса кайрĕ.

(Хамăр корр.).

Çуракине большевикла хатĕрленер

Коммунистсем çуракине хатĕрленес ĕçĕн организаторĕсем

Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче 8 коммунист тăраççĕ, вĕсенчен 4-шĕ парти членĕн кандидачĕсем. Унта кашни коммуниста уйрăм бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем çав бригадăсенче куллен агитацилле-массăллă ĕçе туса пыраççĕ. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Фадеев юлташа 1-мĕш бригада çумне çирĕплетнĕ, II-мĕш бригадăра шкул директорĕ Петров юлташ ĕçлет. Вĕсем, бригадăсенче тăтăшах пулса, унти ĕçсемпе интересленеççĕ, çитменлĕхсем пулсан, вĕсене хăвăрттăн пĕтерме пулăшаççĕ.

Пуçламĕш парторганизаци пулăшнипе колхоз хăйĕн ĕçне начар мар туса пырать. 1943 çулта вăл ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра вĕçлерĕ, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татрĕ. Ашкакай обязательствисене 1944 çулшăн та пĕтĕмпех парса татнă.

Хальхи вăхатра колхозра çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрÿллĕ ĕç пырать. Вăрлăхсене сортласа пĕтерчĕç, вĕсене лайăх амбарсене хучĕç, 35 плуг юсарĕç. Сÿресем хатĕр, сеялкăсем те кашни бригадăрах пур, вĕсем юсавлă.

Колхозниксем вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлеççĕ, вĕсем уя 4 пин лав тислĕк кăларчĕç, 160 центнере яхăн кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç. План тăрăх 250 гектар çинче юр тытмалла, ку таранччен 200 гектар çинче тытнă. Çак кунсенче колхозра агрокружок ĕçлеме пуçларĕ, ăна колхоз агрономĕ, комсомолка Семенова юлташ ертсе пырать.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерессишĕн те тăрăшать. Анчах лашасем пăхас ĕçе япăх организациленĕ, кÿлмелли хатĕрсем те çителĕксĕр. Ку енĕпе малашне тимлĕрех ĕçлемелле.

Х. ЛИСИН.

Уйăхлăха хутшăннă хыççăн

СЕНТЕРВАРРИ. Вырăнти удобренисем тырă тухăçлăхне хăпартас ĕçре мĕнле пысăк вырăн йышăннине халь пурте пĕлеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ваттисем: «Мĕн чухлĕ уя тислĕк тăкатăн, çавăн чухлĕ тырпул туса илетĕн» тенĕ.

Çакна районри нумай колхозсем кирлĕ пек ăнланнă. Çавăнпа вырăнти удобренисене пухас тата тислĕке уя кăларас çĕрте пикенсе ĕçлеççĕ. Анат Макаç ялĕнчи «Октябрь», Пушаркасси ялсоветне кĕрекен «Сĕнтĕрпуç», Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхозсем çак юлашки кунсенче кăна 1100—2000 лав тислĕк уя кăларнă, çак колхозсенче кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе кĕл пухасси те ăнăçлăн пырать.

Вырăнти удобренисене пухас тата уя кăларас уйăхлăх пуçланнă хыççăн та Шуршăл ялсоветне кĕрекен «Çĕнĕ ял» колхозра улшăну çук-ха. Кунта пурĕ те 440 лав тислĕк кăларнипе лăпланса ларнă. Кайăк-кĕшĕк тислĕкне, кĕле, уйрăмăнах фекалие, пухас пирки нимĕн те тумаççĕ. Вырăнти удобренисене хатĕрлес тата тислĕке уя кăларас пирки пыракан уйăхлăх çинчен колхозниксене тивĕçлипе ăнлантарса паман, вĕсене çак ответлă ĕçе мобилизацилемен.

Вырăнти удобренисене хатĕрлесси тата тислĕке уя кăларасси агромероприятисенчен чи пахи пулса тăрать. Тырă тухăçлăхне хăпартасси çак агромероприятине ăнăçлăн пурнăçланинчен килет. Çакна кашни колхозника колхозницăна тĕплĕн ăнлантармалла.

И. ФИРСОВ.

Малта пыракан колхозсенче

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозра çуракине вăхăтра хатĕрленессине чи ответлă ĕç вырăнне шутлаççĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене сортласа хунă, шăтас пахалăхне те сăнанă. Плугсемпе сеялкăсене тахçанах юсаса пĕтернĕ, 64 сÿре пур, вĕсем пурте юсавлă. Çунасем, урапасем тата пур тĕрлĕ ут таврашĕсем ытлашшипех çитеççĕ. Çуракинче ĕçлеме 120 хăмăт тата çавăн чухлех йĕнерчĕк хатĕрленĕ.

«Марс» колхоз членĕсем халь вырăнти удобренисене пухас тата тислĕке уя кăларас çĕрте ырми-канми ĕçлеççĕ. Паянхи кун тĕлне уя 8000 лав тислĕк кăларнă. Ку ĕçре кашни кунах 6 лаша ĕçлет. Лаша витисемпе ферма картишĕсенчен тислĕке татсах тăраççĕ. Кунсăр пуçне 4 тонна кĕл, 3 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Колхозниксем тислĕк кăларас ĕçе мĕн çуракине тухичченых туса пыратпăр теççĕ. Вырăнти удобренисене хатĕрлес тата тислĕке уя кăларас уйăхлăхра плана иртттерсе тултарассишĕн колхозра халь ăмăртуллă ĕç пырать.

* * *

ШАХАСАН. Шĕкĕрти «Новый путь» колхозра çуракине ăнăçлăн хатĕрленеççĕ. Вăрлăхсене сортласине, машинăсемпе плугсене юсассине пĕтĕмпех вĕçленĕ.

Хальхи вăхăтра, уя тислĕк кăларас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, çак кунсенче кăна 640 лав кăларнă, 38 центнер кĕл, 40 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата 12 центнер фекали пухса хатĕрленĕ.

Лашасене çуракине хатĕрлеме тытăннă. Вĕсемпе кирлĕ ĕçре кăна усă кураççĕ. Лаша апачĕсене типтерлĕ тыткалаççĕ.

—Эпир иртнĕ çул лайăх тырпул туса илтĕмĕр, кăçал унтан та вăйлăрах тырпул илессишĕн кĕрешетпĕр, —тет колхоз председателĕ, отечественнăй аслă вăрçă инвалидĕ Иван Спиридонов юлташ.

Т. ГРИГОРЬЕВ.

Япăх хатĕрленеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. (**Телефонпа**). Районра уя тислĕк, планра кăтартнине танлаштарсан, 25,6 процент çеç кăларнă, кĕл 18,6 процент, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 19 процент кăна пухнă. Районра юр тытас ĕç уйрăмăнах япăх пырать, паянхи кун тĕлне плана пурĕ те 8 процент яхăн çеç тултарнă.

Çуракине «Волга» (председателĕ Аванский юлташ), «Единство» (председателĕ Богатырев юлташ) колхозсем ытла та япăх хатĕрленеççĕ. Çак колхозсенче вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрлемен, вĕсене сортламан, уя тислĕк турттарма, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухма тытăнман. Ялхуçалăх машинисемпе плугсене юсасси те сÿрĕккĕн пырать.

Çут çăлтăрсем

(Пĕчĕк калав)

Пĕр каçхине манăн çĕр хутах хуларан В. яльне тухса утмалла пулчĕ. Малтанах нимĕн те курăнмастчĕ. Унтан куçсем кăштах хăнăхма пуçларĕç. Çул ик айккинче те суратсем шакăртатса ларассĕ иккен, тĕллĕн-тĕллĕн шăтман кĕлтесем те курăнкалаççĕ.

Уйăх тухайман-ха. Эпĕ тÿпери çăлтăрсен çуттипе сĕмленсе шавах малалла утатăп, ытараймасăр çÿлелле пăхалăха илетĕп. Тÿпи чăн та хитре вăра. Ахах-мерчен сапнă шăналăк тĕттĕм уя таккишпех карса илнĕ те пин-пин тĕрлĕ çутăпа çиçсе тăрать. Кăвак кăмăшимĕсĕн курăнакан çăлтăрсем кĕç-вĕçех хыпса илсе тĕттĕм çĕре çутатса ярассăн туйăнса тăраççĕ.

Аякра Атăл хумĕсем шавлаççĕ, пароход кăшкăртни илтĕнет.

Кĕрхи уçă сывлăш юмахри чĕрĕ шыв пек кăкăра уçать, юна вĕрилентерет.

Çул йăппине çитес чух малта саçартăк вут куçĕсем йăлтăртатса илчĕç. «Çăлтăр персе анчĕ-ши вара?» тесе шутлама та ĕлкĕрейменччĕ, ман пата шĕр старик утса тухрĕ.

— А-а...—терĕ вăл, мана курсан çĕлĕкне илсе.—Эпĕ каллех выльăх-мĕн килсе тухрĕ тесе... Инçете утатпăр-и?

Ана çинче чăштăртаттарнисем илтĕнчĕç. Тата виçĕ старик кĕлтисене сурат çине пырса хучĕç те пирус чĕртме тухрĕç.

—В. ялне çитмелле-ха, — терĕм эпĕ.—Кĕлте йăтатăр-и?

— Кĕлте йăтас терĕмĕр-ха,—терĕ малтанхи старикĕ, шĕвĕр сухаллă та шĕвĕр çĕлĕклĕскер.—Уйăх килмест-çке...

Эпĕ вĕсене сывлăх сунса хăвартăм та малалла утрăм. Çул çинче тăвата вут куçĕ—тăватă пирус йăлтăртатса юлчĕç.

«Уйăх килмест...—терĕм эпĕ. — Чăн та питĕ те сăпайлă иккен пирĕн çынсем. Вĕсем тем пек пысăк ĕç туcан та, темле паттăрлăх кăтартсан та, çав паттăрлăха кулленхи пĕчĕк ĕç вырăнне çеç шутлаççĕ».

Чылай кайсан, эпĕ татах каялла çаврăнса пăхрăм. Инçетре-инçетре, тĕттĕм горизонт хĕрринче,—те çут çăлтăрсем, те паçăрхи старликсен пирусĕсемех,—çаплах йăлтăрти вут куçĕсем пек çиçсе тăраççĕ.

Халĕ те, унтанпа нумай кунсем, нумай эрнесем иртнĕ пулин те, ĕç паттăрĕсем çинчен вулана чух, эпĕ тÿрех çав старлксене аса илетĕп. Ырми-канми ĕçлекен ват старлксен сăнĕсем те, вут куçĕсем те ман асра темшĕн пĕрлешсе пĕр çутă образ—тÿпери ĕмĕр сÿнми çут çăлтăр пек пулса тăраççĕ.

Мухтав çут çăлтăрсене!

ХВЕТĔР УЯР.

Укерчĕк çинче: Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри 2-мĕш бригадăри паллă стахановка **А. Козлова** юлташ.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

ĔÇÇЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН СЕССИЙĔ

Çак кунсенче ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн 23-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси Шупашкар хулинчи шкулсен ĕçĕсем çинчен сÿтсе-яврĕ. Çак ыйтупа депутат Кириллова доклад туса пачĕ.

Хулара пĕтĕмпе 13 шкул. Вĕсенче халĕ 5.273 ача вĕренеççĕ. Всеобуч законне хулари шкулсенчен Сосновкăри тулли мар вăтам шкул (директорĕ Дывяк юлташ) тата Чапаев поселокĕнчи вăтам шкул (директорĕ Карлинская юлташ) чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Хĕрачасен 1-мĕш, 2-мĕш номерлĕ вăтам тата 3-мĕш номерлĕ пуçламĕш шкулĕсем те вĕсенчен юлмаççĕ. Ытти шкулсем вара всеобуч планне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе юлса пыраççĕ. Çакă вăл хула Совечĕпе çутĕç пайĕ тата шкул директорĕсем правительство всеобуч çинчен кăтартса панине кирлĕ пек хакламаннинчен, ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шанса тăнинчен килет. Хулара паянхи куна çитсе те шкул çулне çитнĕ ачасене тĕрĕс шута илсе çитермен. Çак закона пăсакансене пĕр çынна та тивĕçлĕ ответ тыттарман.

Сесси хула Советне кăçалхи вĕренÿ çулĕнче шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарма, февралĕн 1-мĕшĕччен шкул çулне çитнĕ ачасене шута илсе çитерме, шкул ачисене пулăшас ĕçе вăйлатма хушса хăварчĕ.

Ачасене вĕренĕве явăçтарни—всеобуч законне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тумалли ĕçсен пĕр пайĕ кăна пулать-ха. Вĕренме условисем туса парас, фронтовиксен ачисемпе тăлăх ачасене пулăшас, ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче ăнлантаруллă ĕçе туса пырас, шкулсенче вĕри апатсем пĕçерессине тивĕçлипе йĕркелес ĕçсем çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Хула Совечĕ ку таранччен вĕренекенсене ата-пушмаксемпе çăматăсем 234 мăшăр, 352 пальто, хĕрача кĕписем 214, 15 кĕрĕк пиншак парса пулăшнă. Анчах та хуçалăхпа суту-илÿ организацийĕсем вара шкул ачисене пулăшас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Вĕрентÿпе воспитани ĕçĕн кăçалхи итогĕсемпе паллашсан, тăван тата вырăс чĕлхисене, çар дисциплинине вĕрентес ĕç çителĕксĕр пулса пыни палăрать. Сесси хула совечĕн çутĕç пайĕ учительсен ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслесе пынине палăртрĕ.

РСФСР Наркомпросĕ «вĕренекенсен хăйсене тыткаламалли правилисене» çирĕплетрĕ. Çакă вăл шкулти вĕренÿпе воспитани ĕçне лайăхлатма, ачасен дисциплинине çирĕплетме пулăшать. Анчах та хулари пур шкулсемшĕн те çак правила закон пулса тăнă теме çук-ха.

Сесси ачасене шкул тата класс тулашĕнче воспитани парас ĕçе тивĕçлипе лайăхлатма хушрĕ. Çавăн пекех ачасене çар ĕçне вĕрентесси çине тата физкультура ĕçĕ çине тимлĕн çаврăнса пăхманнине палăртрĕ. Арçын ачасен пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче çар ĕçне вĕренмелли уйрăм пÿлĕм тата спорт площадки те çук. Старши военрук Нагорный юлташ ку тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçлет.

Доклад тăрăх прения Чăваш АССР Совнарком Председателĕн заместителĕ Евлампьев, депутат Макаров, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Романова, депутат Ковалева, депутат Плетнев, депутат Черпакова тата сессире пулнă ытти юлташсем те тухса каларĕç.

Сесси Шупашкар хулинчи шкулсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Ют çĕршывсенче

В. И. Ленина асăнса тунă пуху

СТОКГОЛЬМ, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Швецсен Совет Союзĕпе культурăллă çыхăну тытас тĕлĕшпе ĕçлекен обществи, В. И. Ленин вилни 20 çул тултарнине асăнса, Стокгольм хулинчи Халăх çуртĕн пысăк залĕнче пуху туса ирттернĕ. Обществăн вице-председателĕ доктор Ада Нильссон сăмах тухса каланă. Вăл Ленин ячĕпе тăракан хула патĕнчи çарсем тăшмана çав тери çĕмĕрни Швеци халăхне питех те хавасланса савăнтарни çинчен хĕпĕртесе пĕлтернĕ. Унтан датчансен паллă писателĕ Мартин Андерсен-Нексе В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен пысăк доклад туса панă.

Англи журналисчĕ гитлерла Германие Франко пулăшни çинчен

Акăлчансен «Ньюс кроникл» хаçачĕ Каммингсăн статьине пичетлесе кăларнă. Каммингс, Англие Испанирен илсе пынă апельсинсен ещĕкĕсенче бомбăсем тупни çинчен каласа, çапла çырать:

«Франко—фашистла суеçĕ тата ултавçă. Çак ишекен вăрçа пуçласа янăшăн вăл Европăри фашистла шайккăн ытти членĕсемпе пĕрлех ответ тытмалла. Фашизм çĕнтерессине хăй ĕненнине вăл нихăçан та пытарса тăман. Чи йывăр кунсенче те вăл тăшмана пулăшма, пирĕн вăрçă планĕсене пăтраштарса яма тăрăшнă. Вăл Гитлерпа Муссолинишĕн шпионла ĕçленĕ, вăл Англин карапĕсем пугнин тата акăлчансемпе союзниксен çыннисем пĕтнин аякри сăлтавĕ пулса тăнă. Вăл Англин Мадридри посольне йĕрĕнтермелле тыткаланă. Вăл Танжерта хăй тунă законсăр ĕçсем пирки Англи протестленине пĕрте шута илмен. Вăл Испани çарĕсене Хĕрлĕ Çарпа çапăçма янă. Вăл Испани суднисене Германин подводнăй лодкисене горючи пама ярса тăнă».

«Вăрçă Германие хирĕç çаврăнса кайсассăн,—тесе çырать малалла Каммингс, — Франко хăй валли çурăк шырама тытăннă. Нейтралитет тытса тăрас тесен, хăйĕн «кăвак дивизине» Российăран каялла илсе килме кирли çинчен Англи правительстви каланине хăлхана чикнĕ пек те тунă вăл. Анчах та Испани çарĕсем ĕлĕкхи пекех Хĕвелтухăç фронтĕнче çапăçаççĕ. Нимĕçсем çапла каларĕç: Çурçĕр Италире нимĕçсем тунă фашистла правительствăна Франко йышăннă, тесе пĕлтерчĕç. Франко Германие ĕлĕкхи пекех вольфрам тата вăрçăра кирлĕ ытти паха материалсем парса тăрать.

Халĕ, союзниксем фашистла Испание хĕстерме пултарнă вăхăтра, союзниксен Франко правительствине çакăн çинчен лайăх ăнлантарса памалла: Англипе Америка фашистла шакалсене хăйсене улталама парасшăн мар, çав çĕршывсем хăйсен шухăшĕсене пурнăça кĕртмешкĕн хăйсен пĕтĕм хăвачĕпе усă курĕç. Англири тата ытти çĕршывсенчи демократие кураймаи Франко правительстви çавăн пек асăрхаттарнине çеç хисеплеме пултарать». (ТАСС).

Канада хаçачĕ Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусем çинчен

Канадăра тухакан темиçе пысăк хаçат Совет Союзĕпе Польша хушшинчи чикĕсем пирки Совет правительстви сĕннине ырланă. Торонтора тухакан «Глоб энд мейл» хаçат редакцийĕ çырнă статьяра совет сĕнĕвне «ырă кăмăллă», питĕ паха тата лайăх мир тăвас ĕçре питĕ усăллă сĕнÿ тесе хакланă. Хаçат шухăшĕпе, çак сĕнÿ вăл Россия ытти çĕршывсен интересĕсене шута илнине тата вăл вăйлă Польша тăвасшăн пулнине кăтартса парать. (ТАСС).

„Мĕн куртăм эпĕ Российăра"

США-н ÇАР ПРОИЗВОДСТВИ УПРАВЛЕНИЙĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ НЕЛЬСОН ÇЫРНĂ СТАТЬЯ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Кольерс» ятлă журналăн черетлĕ номерĕнче США-н çар производстви управленийĕн председателĕн Нельсонăн «Мĕн куртăм эпĕ Российăра» ятлă статьине пичетлесе кăларнă.

Нельсон Совет Союзĕн индустрийĕ аталанса пынине пысăк хак парать тата Совет Союзĕпе Америка хушшинче суту-илÿ сарăлса каяссине курса тăрать. Вăл Çурçĕр Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем вăрçă хыççăн Совет Союзĕн экономикине аталантарма пулăшасса шанать. Совет Союзĕ промышленноçа хăй пĕчченех аталантармалли плансем палăртса хунине паллă туса, çав тĕллеве пурнăça кĕртетех тесе шантарать. Анчах çак ĕçе американецсем пулăшнипе туса пырсан авантарах пулать, тесе палăртать Нельсон. Совет Союзĕ,—тесе çырать вăл,—вăрçă хыççăн тĕнчере çĕнĕ вырăн йышăнать. Россия ĕнтĕ ытти çĕршывсем çине шанмасăр пăхакан, промышленность енĕпе кайра тăракан çĕршыв мар. Российăна хирĕç пыракан шухăшсем малашне те юлас пулсан та, вăрçă хыççăнхи Россия пĕр чарăнмасăр малалла кайма пăрахмĕ, вăл индустри енĕпе пĕтĕм тĕнчере малта тăракан державăсен шутне кĕрĕ.

Малалла Нельсон, шанмасăр тăнисемпе кивĕ шухăш-кăмăлсем пулнă пулсан та, Пĕрлешÿллĕ Штатсем Совет Союзне тахçанах йышăннине палăртать. Совет Союзĕ «чи хаяр скептиксене те», вăл шутран Америкăри тата Англири çар деятелĕсене те, советăн çапса аркатакан хĕçпăшаллă вăйĕсем пуррине йышăнтарчĕç. Апла пулин те американецсем ку таранччен Совет Союзĕн индустрийĕ çинчен сахал пĕлнипе кăнăçса тăнă пулас. Нельсон хăй Совет Союзне ытларах пĕлме кирли çинчен калать. Совет промышленноçĕнче пуçлулса тăракан турттăма кайса кураччен пĕлменнине США-на таврăннă хыççăн ăнланса илтĕм, тесе çырать Нельсон.

«Совет Союзĕ вăрçă пынă вăхăтра япаласене массăллăн туса кăларас науккăна вĕренсе пырать, анчах вăл Америкăри ĕç меслечĕсене йышăннипе кăна чарăнса тăмасть, — тет Нельсон. «Эпĕ Российăра производство формин поточнăй меслечĕсене куртăм, вĕсен идейи Россиярах çуралнă. Çав идейăсенчен хăшпĕрисене пирĕн хамăрăн та йышăнмалла».

Совет промышленноçĕ çинчен каласа, Нельсон çакна паллă тăвать: «Вăрçă условийĕсене пула транспорт çитменнипе Совет Союзĕн нумай предприятийĕсем чĕртăвартан пуçласа хатĕр продукци таранах хăйсем туса кăлараççĕ. Америка промышленноçĕнче, предпринимательсен пуçарулăхĕн системи çинче тайăнса, операцисене темиçе предприяти туса тăрать. Государство контроллесе тăракан совет промышленноçĕнче операцисене централизациленĕ. «Россия, индустрилле шухăшлать». Малашлăхăн пĕтĕм планĕсем Совет Союзĕ хăй тĕллĕн аталанмалли программăпа çыхăнса тăраççĕ. Çакă ĕнтĕ Совет Союзне никама пăхăнмалла мар туса хума пулăшать.

Автор вăрçă условийĕсене пула Совет Союзĕн хăшпĕр предприятийĕсене кирлĕ таран планласа лайăх тăвайманнине тата çителĕклĕ таран çутă кĕртейменнине кăтартса çырать. Вырăссем çак çитменлĕхсене йышăнаççĕ, вĕсем, ĕç условийĕсем американецсеннипе танлашсан, ĕç тухăçлăхне тата ытларах ÿстерме шутлаççĕ, ĕç тухăçлăхĕ вĕсен халĕ те çÿлте тăрать. Вырăссем производствăри ĕç меслечĕсене американецсенчен йышăннипех лăпланмаççĕ. «Правительство тата ăна пăхăнакан çынсем американецсем шухăшланинчен таччăнрах пĕтĕссе тăраççĕ. Вырăс рабочине тăшмана çĕмĕрсе тăкас ĕмĕтрен пысăкрах ĕмĕт хавхалантарать. Çак движени тăшмана çĕмĕрсе тăкнă хыççăн та вăйланса пырĕ».

Совет промышленноçĕнчи рабочисен шухăш-кăмăлĕ питĕ лайăх пулни çинчен каласа, Нельсон совет рабочийĕсемпе хĕçпăшаллă вăйсем хушшинче ытти çĕршывсеннинчен çирĕпрех çыхăну пуррине паллă тăвать. Вăл совет заводĕсен стенисем çинче вăрçă операцийĕсене кăтартакан карттăсем çакăнса тăни çинчен тата совет рабочийĕ хăйне малти линири фронтовикпе тан туйса тăни çинчен калать.

«Вырăссемпе американецсем хушшинче мĕнле те пулин çитменлĕхсем пур пулсан, тесе çырать Нельсон, çак айăпăн чылай пайне США хăй çине илме тивĕç». «Совет Союзĕнче тĕл пулнă пек уçăмлăха тата реализма эпĕ сайра хутра çеç тĕлпулнă». Совет Союзĕ хавхаланса тăрать. «Вырăссем вĕренесшĕн çунаççĕ, вĕсен лăпланса ларасси çук, вĕсем хăйсен çитменлĕхĕсене уççăнах йышăнаççĕ. Çак хавхалану кунран кун сарăлса пырать».

Юлашкинчен, Нельсон вырăссем Америкăри промышленность облаçĕнчи çитĕнÿсенчен тĕлĕнеççĕ, тесе çырать.

Вырăссем Америка кивçен е арендă йĕркипе пулăшса тăнине лайăх ăнланаççĕ тата хисеплеççĕ. Малашне Россия хăйĕн тĕллевĕсене, кирлĕ пулсан, США пулăшмасăрах пурнăçлать. Анчах та çак япалана США пулăшнипе тусассăн лайăхрах шутлать.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс фронтĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованине пăхăнса тăракан Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: союзниксем Рим хулинчен кăнтăртарахра тунă плацдарм районне американецсемпе акăлчансен çарĕсем тата материалсем вĕçĕмсĕр пырса тăраççĕ. Фронтăн ку участокĕнче тăшман вăйлăн хирĕç тăрайман.

Римран кăнтăртарахра ларакан Неттуно хулине союзниксен çарĕсем тытса илнĕ.

Америкăн 5-мĕш армийĕн фрончĕн главнăй участокĕнче чылай пункгсенче тăшман хаяр контратакăсем пуçласа янă. Ку контратакăсене нумайĕшне, тăшмана йывăр çухатусем кÿрсе, сирсе янă. Рапидо шывĕн анат юхăмĕпе пыракан фронт участокĕнче американецсен çарĕсем, каялла Рапидо шывĕн хĕвелтухăç хĕррине çитиччен чакса, вăйлă çирĕплетнĕ позицисем йышăннă.

Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче патрульсем çапăçнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: январĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă.

Январĕн 23-мĕшĕнче союзниксен темиçе çĕр самолечĕ Çурçĕр Францири объектсене çĕнĕрен тапăнма пуçланă. Çав операцисене американецсен 200 бомбардировщикĕ ытла хутшăннă.

Бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем кăнтăрла иртсен Ла-Манш урлă вĕçсе каçнă та Па-де-Кале районĕнчи çар объекчĕсем çине 300 тоннăна яхăн бомбăсем пăрахнă. Çак операци хыççăн Норвеги летчикĕсем «Спитфайр» йышши самолетсемпе Амьен районне штурмланă.

Январĕн 24-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Çурçĕр Францири çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, январĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Берлина тапăннă.

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Англи бомбардировщикĕсем январĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлина тапăнни питех те вăйлăн пулса иртнĕ. Акăлчансен тăватă моторлă бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Берлин çине 30 минут хушшинче 2.300 тонна ытла бомба пăрахнă.

СОФИЯ ХУЛИНЧИ ЛАРУ-ТАРУ

СТАМБУЛ, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, София хулинче халĕ те йĕрке çук-ха. Государство учрежденийĕсем, правительство хушнă пулин те, ку таранччен те ĕçлемеççĕ. Суту-илÿ çукпа пĕрех. Суту-илÿ тăвакансем, хăйсен юлашки таварĕсене илсе, хуларан тухса тарнă. Пĕтĕм хулипе те виçĕ ресторан кăна ĕçлеме тытăннă, вĕсенче те пулин шÿрпе кăна пĕçереççĕ. Ресторана кĕрсен те, унта 30 минутран ытла пулма юрамасть.

Министрсем Софияра кăнтăрла кăна пулаççĕ, çĕр каçма хуларан урăх вырăна тухса каяççĕ.

Ответлă редакторшăн

П. Т. ЗОЛОТОВ.

Шупашкар горисполкомĕ пур учрежденисене те тата предприятисемпе заведенисене те çакăн çинчен пĕлтерет: АТĂЛ УРЛĂ ТОННА ÇУРĂ ТУРТАКАН АВТОМАШИНĂСЕНЕ КАÇСА ÇÿРЕМЕ ИРĔК ПАНĂ.

ГОРИСПОЛКОМ.

Чăвашпромстрахкассăна ялан ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор, оргинструктор, ĕçри инкексемпе кĕрешекен инспектор, бухгалтерсем тата шут ĕçне вĕренекен учениксем, çавăн пекех тата довереннăй врач кирлĕ, унăн ĕç укçи 800 тенкĕ пулать.

Ĕçлеме кĕрес текенсен çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Набережная Кайбулки, 21 (Кожупряжь промартелĕн çурчĕ).

2—1.

Госсортфондăн Чăваш республикинчи конторине çакăн пек работниксем кирлĕ: главнăй бухгалтер, старши агроном, агрономсем, механиксем, тăрлăх базисен старши бухгалтерĕсем, хатĕрлев пункчĕсен заведующийĕсем, счетоводсем, лаборантсем Шупашкарта тата районсенче ĕçлеме.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Набережная Волги, 13.

2—.1

Транспортпа экспедици конторине ялан ĕçлеме диспетчер-контролерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Союзная 4.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.

НТ 00521